16-мӗш ҫул тухать.

# КАПКӐН

№ 17 СЕНТЯБРЬ, 1940 ҫул

*„Чӑваш Коммуни" ҫумӗнче тухать.*



«Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Вӑйли ҫук та этемрен:

Шывсем ҫинче, ҫӗр ҫинче
Хуҫа пулса вӑл тӑрать». К. В. ИВАНОВ.

# ЭЛЕКЛЕМЕ ПĔЛМЕН ПИРКИ...

Джон паян та ĕнерхи пекех ĕççĕр. Темиçе уйăх та иртрĕ ĕнтĕ вăл ĕççĕр тăрса юлни. Акă кĕçех хвартертен те хăвалама пуçлĕç Джона, мĕншĕн тесен унăн хваттерĕшĕн тӳлеме укçа çук. Çиессе те Джон темиçе уйăх хушши тăраниччен çисе курман ĕнтĕ. Май çук капла ĕççĕр пурăнма, анчах ăçта тупăн-ха ăна? Фабрикăсене каяс—йышăнмаççĕ. Çĕнĕрен йышăнма мар, темиçе çул ĕçленĕ рабочисене те ĕçрен кăлара-кăлара яраççĕ. Государство учрежденийĕсене те Джон пеккисене илмеççĕ. Унта фабрикантсен, заводчиксен, банкирсен, тĕрлĕ чиновниксен тавраш ĕсем кăна ĕçлеççĕ. Йывăр Джонăн пурнăçĕ. Юлташĕсем пулăшĕччĕç, тен, Джона, анчах вĕсем те, Джон пекех, выçăллă-тутăллă пурăнаççĕ.

* * *

Темза çыранĕ. Çыран лăках халăхпа тулнă: кунта та, унта та вучах тĕтĕмĕ йăсăрланать—вырăнтан вырăна куçса çӳрекен темĕнле халăх вăхăтлăха пурăнма вырнаçнăн туйăнать. Кунта ваттисем те нумай, арçынсем те, хĕрарăмсем те туллиех. Вĕсем пурте Джон пек ĕççĕр тăрса юлнисем.

Çыран хĕрринчи пĕр чул çинче чылайччен Темза шывĕ Çурçĕр тинĕселле ыткăннине пăхса ларнă хыççăн Джон каллех хуланалла улăхрĕ. Вăл ĕç шырать, унăн ĕç тупмалла. Вăл пĕрре кăна мар ĕнтĕ Лондон урамĕсене „виççе тухнă", анчах кашнинчех нимĕнсĕр таврăннă. Паян та Джонăн нимĕнле шанчăк çук, çапах та вăл малаллах утать. Тен вăл, çакăн пек ĕç пулса иртмен пулсан, татах утнă пулĕччĕ, анчах çӳллĕ те вăрăм çурт çумĕпе иртсе пынă чухне Джон акă мĕн курать:

> ***ПĔЛТЕРӲ***
> *Пирĕн агенствăна*
> *васкавлă*
> *корреспондент кирлĕ*

Вуланă хыççăн Джон хăйне хăй ĕненмерĕ. Чăнах-ши ку вара: мĕн чухлĕ журналист ĕççĕр, çав вăхăтрах йышăнман вырăн та пур.

— Сирĕн агенствăна корреспондент кирли çинчен вуларăм. Ĕçлес шутăм пур—тесе пĕлтерчĕ Джон çуртăн 4-мĕш хутне вырнаçнă пĕр пулĕме кĕрсе.

— Кирлĕ, питĕ кирлĕ. ССР Союзĕ çинчен çырма пĕлекен корреспондент кирлĕ.

— ССР Союзне эпĕ питех те аван пĕлетĕп. Унăн хуçалăхĕпе эпĕ çителĕклĕ паллашнă.

— Пĕлетĕп, тетĕн? Юрĕ. Апла пулсан, каласа пар-ха, сăмахран, мĕн пĕлетĕн эсĕ ССР Союзĕн промышленноçĕ çинчен?—тесе ыйтрĕ Джонран унпа калаçаканни.

— СССР промышленноçĕ вăл питех те хăвăрттăн ӳссе пырать. Фабрикăсемпе заводсенче стахановла движени, нумай станокпа ĕçлесси сарăлса пырать, тепĕр майлă каласан...

— Çитет, мистер! ССР Союзĕ çинчен пачах та пĕлместĕн иккен. Пирĕн агентствăра ĕçлеме пултараймастăн. Сывă пулăр...

— Тăхтăр-ха, мистер, эпĕ каласа пĕтерейменрĕм,—тесе малалла калаçасшăн пулчĕ Джон. Анчах унпа калаçаканни ăна итлесшĕн те пулмарĕ. Джонăн вара пӳлĕмрен ахалех çаврăнса тухмалла пулчĕ.

Малалла мĕн тумалла? Чим-ха,—терĕ Джон, хăйне хăй,—теприн патне каям. Промышленность çинчен тĕплĕн каласа пама пултараймарăм пулсан, ССР Союзĕн ялхуçалăхне лайăх пĕлетĕп.

— Сирĕн агентствăна ССР Союзĕ çинчен лайăх пĕлекен корреспондент кирлĕ тенине илтнĕччĕ?—тесе ыйтрĕ Джон юнашар пӳлĕме кĕрсе.

— Кирлĕ, питех те кирлĕ. Сирĕн яту мĕнле-ха, мистер?

— Джон.

— Юрать, питĕ аван. Анчах та каласа парăр-ха, мĕн пĕлетĕр эсир, мистер Джон, ССР Союзĕн ялхуçалăхĕ çинчен.

— СССР ялхуçалăхĕ вăл пĕрлешнĕ хуçалăх. Совхозсемпе колхозсем çулсерен çавтери вăйлă тырпул туса илеççĕ. Колхозниксем...

— Çитет, мистер Джон! Совет Союзĕ çинчен пачах та пĕлместĕр иккен. Пирĕн агентствăра ĕçлеме юрăхлă мар эсир. Сывă пул.

Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнет Джон. Мĕнле ку вара,—шухăшлать Джон,—тĕрĕссипех калатăп-çке. Анчах пурте: „нимĕн те пĕлместĕн иккен", теççĕ. Чим-ха, тата теприн патне кĕрсе тухам, терĕ каллех Джон хăйне хăй.

— Халĕ кăна пĕлтерӳ вуларăм. Сире корреспондент кирлĕ пулас. Ĕçлес тетĕп—тесе пĕлтерчĕ Джон татах тепĕр пӳлĕме кĕрсе.

— Кирлĕ, анчах пире Совет Союзĕ çинчен çырма пĕлекен çын кирлĕ. Пултарăр-и?

— Мĕншĕн пултарас мар. Эпĕ ССР Союзне питĕ аван пĕлетĕп.

— Калăр-ха тархасшăн, апла пулсан, мĕн пĕлетĕр эсир, сăмахран, Совет Союзĕн культури çинчен?

— Кам пĕлмĕ ĕнтĕ çавăн пек чечекленекен культурăна! Культура ыйтăвĕсем çине çавтери тимлĕн...

— Нимĕн те пĕлместĕн иккен, мистер. Сан пек корреспондентсем пире кирлĕ мар...

Çапла вара, Джонăн пурнăçĕ паян та улшăнмарĕ.

* * *

Темза çыранĕ. Джон каллех ĕнерхи чул çинче ларать. Анчах вăл паян пĕччен мар—паян унăн юлташĕ Джек та унпа пĕрле. Ĕнер пулса иртнĕ ĕç çинчен Джон ăна тĕппипех каласа пачĕ.

— Ухмах,—терĕ ăна Джек, вăл каласа панине тимлĕн итлесе ларнă хыççăн,—халиччен те ăнланса илейместĕн вĕсене мĕнле корреспондент кирлине. Санăн чăнахах вĕсем патĕнче ĕçлеме кăмăлу пулсан, айта халех каятпăр. Шантарса калатăп: ыранах ĕçлеме пуçлăн.

— Айта!

Джонпа унăн юлташĕ Джек каллех ĕнерхи çӳллĕ те вăрăм çурта пычĕç. Пĕлтерӳ паян та çав

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

вырăнта [illegible] тăрать никама та илмен пулас. Тепĕр пĕр-ик минутран Джекпа Джон 4-мĕш хута хăпарса ĕнерхи пӳлĕме кĕрсе те тăчĕç.

— Сире корреспондент кирли çинчен пĕлтĕмĕр. Ĕçлес кăмăл пур пирĕн—сăмах пуçларĕ Джон юлташĕ Джек.

— Кирлĕ. Анчах, пире Совет Союзĕ çинчен çырма пĕлекен корреспондент кирлĕ.

— ССР Союзне эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ.

— Калăр-ха, апла пулсан, мĕн пĕлетĕр эсир Хĕрлĕ Çар çинчен?

— Хĕрлĕ Çар вăл,—куçне хупарах калаçа пуçларĕ Джек,—тĕнчери чи вăйсăр çар. Вăл начар хĕçпăшалланнă. Танксене Совет Союзĕнче хутран тăваççĕ, тупăсене тар вырăнне хăйăрпа тултараççĕ. Красноармеецсем çийи-çими...

— Молодец!—тесе кăшкăрса ячĕ савăннипе ĕнерхи çын,—ыранах ĕçлеме пуçлатăр. Яту мĕнле, мистер?

— Джек.

— Сирĕн?

— Джон.

— Ыранах ĕçлеме пуçлатăр. Укçа кирлĕ мар-и?

— Паянлăха пурăнатпăр-ха.

* * *

— Куртăн-и, кам кирлĕ вĕсене?

— Куртăм.

— Ну мĕнле?

— Каймастăп. Пулмасть чуна çутма!

Джонпа Джек каллех малалла утрĕç. Тепĕр пĕр-икĕ эрнерен вĕсем çакна пĕлчĕç: кирлĕ корреспондента агентство чăнахах тупнă, анчах вăл Джек та пулман, Джон та мар, хăйĕн пурлăхне картла выляса янă пĕр фабрикант ывăлĕ пулнă.

Р. М.

# ХĂШ ВĂХĂТРА ХЫРĂННĂ?

Н. Сверчков ӳкерчĕкĕ.



Заняти пуçлансан



Заняти пĕтес умĕн

# ТУНКАТАСЕМ

Юлташ Веселов, каласа пар-ха иртнĕ каç çав тери тĕлĕнмелле тункатасем курни çинчен. Каласа пар-ха,—çине-çинех ыйтаççĕ юлташĕсем.

— Есть. Каласа парас,—хăй калавне пуçларĕ Веселов,—хăлхăрсене пурте чанк! тăратăр.

— Есть—пурте хăлхăрсене чанк! тăратăр,—терĕç юлташĕсем, кулкаласа.

— Хĕвел хăйĕн кулленхи ĕç нормине çĕр проценчĕпех тултарнă хыççăн тасти сăртсем хыçне канма анса ларчĕ. Пĕлĕт çинче миллион çăлтăрсем электролампăчкăсем пек çутăла-çутăла кайрĕç. Хĕвелĕн касхи помощникĕ—уйăх та хăпарчĕ, пĕлĕт тăрăх, çутă футбол пек, хуллен-хуллен шурĕ. Хуллен, хура кушак пек йăпшăнса, шуса килчĕ çуллахи каç. Тĕлĕрет тĕнче, канать, сывăрать. Канаççĕ республикăсем, облаçсем, хуласем, ялсем, тусем, уйхирсем, вăрмансем... Чикĕ те хĕрсех сывăрать пек. Кунта та шăп. Канăçсăр çил çеç сывăрма пĕлмест: тем çинчен пăшăл-пăшăлпăшăл пăшăлтатать йывăç çулçисемпе. Çук, пурте сывăрмаççĕ. Сывăрмасть чикĕ. Кунта шăплăх ултавлă. Ăçтан шанатăн-ха ăна. Тăратăп секретра. Лайăх сисетĕп: куçсем, хăлхасем, туйăм-сисĕмсем кăнтăрлахинчен вуншар хут ытларах, харсăртарах, сисĕмлĕрех ĕçлеççĕ. Умăмра—хитрех мар картина: шурлăх, шурлăх хĕррипе—тункатасем, имшеркке йывăçсем. Акă уйăх, темрен вăтаннă пек, пĕлĕтсем айне тарса пытанчĕ. Кам пĕлет, тен, пытанмалла вылясси килчĕ пуль çăлтăрсемпе. Тĕксĕмĕн кăна курăнаççĕ тункатасем.

— Ак тамаша,—шухăшсем ăмăртмаллах чупа пуçларĕç пуçăмра.—Тĕлĕнмелле. Мĕнле вара ытларах курăнма пуçларĕç-ха тункатасем. Неушлĕ, кăмпасем пек, сасартăк шăта-шăта ларма тапратрĕç вĕсем. Халиччен çутçанталăкра пулман факт. Дарвин та, Мичурин та çавтери тĕлĕннĕ пулĕччĕç пĕр-ик сехет хушшинче халиччен тап-таса пулнă вырăнта тункатасем туха-туха ларнине курсан. Аха. Пĕри кăшт шурĕ иккен. Акă тата тепри. Виççĕмĕшĕ. Ку çĕнĕ тункатасем шума та пултараççĕ иккен. Пит хуллен шăваççĕ пулин те—сисмелле. Чĕрчунсенчен пример илсе йывăç-куракăсем те, тункатасем те куçса çÿреме пуçлаççĕ-ши мĕн вара малашне? Кам пĕлет çутçанталăкăн аслă та тĕлĕнмелле законне. Тен, кĕçĕртен, çак сехетрен пуçласа пур чунсăр япаласем те чунлисем пек куçса çÿреме тытăнаççĕ. Пĕр вырăнта тăрса йăлăхрĕç пуль вĕсем. Эх, аванччĕ-çке вара. Сăмахран, лар та, тунката çине, каях ăçта кирлĕ унта. Лаша та, машина та кирлĕ мар.

Е куçăм аташа пуçларĕ. Тен, вăл алчăраса кайрĕ. Пĕр япаланах ик-виç япала пек курмастăп-ши эпĕ? Аптăраса хам умрах ларакан йывăçпа тунката тана темиçе хутчен пăхса илетĕп. Çук. Вĕсем пĕрре те темиçеленсе курăнмаççĕ. Тĕлĕкре аташмастăп-ши тесе çатăр! чĕпĕтсе пăхатăп ÿтĕме. Ыратать. Тĕлĕкре мар мĕн.

Çук! Мана улталаймăр, тунката „юлташсем"! Эпĕ ĕненес çук нихăçан та эсир пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿреме пултарассa!.. Аха! Кунталлах шăватăр пулас-ха. Килĕр, килĕр. Халиччен курман тĕлĕнмелле хăнасене пур енчен те хатĕр пулса кĕтсе илем. Нуккă, чи çывăхрине пĕр „конфеткине" винтовкăпах персе парам. Мĕн тейĕ? Тен, чĕлхи те пулĕ ун, шăваканскерĕн.

— Кĕрс!—касхи шăплăха шарт сиктерсе хăйĕн вăйлă сассипе кĕрслетсе илчĕ савни пек çывăх винтовка юлташăм.

— Ах!..—тискеррĕн ахлатрĕ тунката.—Ай!..—Аха, чĕрĕ тункатасем иккен кусем. Нуккă тепĕрне хăналам,—терĕм те тепĕрне тĕллесе петĕм. Ку та тискер сасăпа йăнăшса илчĕ те шăпланчĕ. Унтан тепĕрне. Халь ĕнтĕ каялла çын хăвăртлăхĕпех шума пуçларĕç тункатасем. Ман конфеткăсене юратмарĕç пулмалла вĕсем. Аха! Эсир тарма-и, „хисеплĕ тункатасем"? Руки вверх! Хăраса ÿкнипе пурте аллисене çÿлелле çĕклеççĕ тункатасем. Сасартăках тункатасенчен çынсем пулса тăраççĕ. Чăн-чăн çынсем. Пуçлă, сăмсаллă, пит-куçлă, ус-силлĕ, алăллă çынсем. Çĕр процентлă çынсемех. Урисем çеç курăнмаççĕ. Вĕсем лачакара. Çичĕ çын. Виççĕшĕ выртаççĕ. Вăл тункатасем вырăнтан пĕр сантиметр та куçма пултараймаççĕ ĕнтĕ тек, мĕншĕн тесен моторĕсем (чĕрисем) ĕçлеме чарăннă вĕсен. Ыттисене, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма пултараканнисене, мана пулăшма çитнĕ юлташсем, акă—Васильев та пурччĕ вĕсемпе,—заставăна илсе килчĕç. Кунта лайăх тĕпчесе пĕлчĕç ĕнтĕ вĕсене: вĕсем мĕнле йышши тункатасем пулнине, хăш патшалăхран çулçÿреве, похода тухнине, вĕсен маршручĕпе финишне, мĕнле плансене пурнăçлама килнине, мĕншĕн, мĕнле интерессемпе социализм чикки урлă каçнине, мĕншĕн вĕсем тунката пулма шутланине.

Çапла пулса иртрĕ ку ĕç иртнĕ каç. Астуман та калама, пит усал тункатасем пулчĕç вĕсем. Кашнинех револьвер. Переççĕ. Анчах уссиех пулмарĕ вĕсен пенинчен. Пурпĕрех çакланчĕç пирĕн алла. Паллах, эпир нихăçан та вĕсене савнирен те пахарах çĕршыв тăрăх пĕр утăм та утма, е тунката пулса шума ирĕк парас çук. Калавăм пĕтрĕ. Точка.—Çапла пĕтерчĕ калавне пограничник Веселов.

— Мĕн кăна хăтланмаççĕ-ши вĕсем—шпионсемпе диверсантсем—СССР чикки урлă каçас тесе. Анчах хăть йытă, хăть упа, хăть тунката, хăть те мĕн пулса килччĕр, хăть те мĕнле маскă тăхăнса килччĕр—пурпĕрех çакланаççĕ пирĕн алла, пурпĕрех,—чылайччен çапла шăкăлтатса калаçса ларчĕç çамрăк та паттăр красноармеецсем—социализм çĕршывне куç шăрçине сыхланă пек сыхлакан боецсем.

**Вениамин Туртуш.**

## Паллах...

— Çавăнта камсене тырă валеçеççĕ вара?
— Паллах, ĕçлекенсене.

## Начальник отпускра

**(Магазинри калаçу)**

— Отпускра мар пулĕ-çке: заняти вăхăтĕнчех кунта çÿретĕн?
— Хам отпускра мар, начальник отпускра-ха.

# ШКУЛТИ ДРАМКРУЖОКРА



— Пиллĕк писатель патне çыру ятăмăр ĕнтĕ ачасем валли пьесăсем çырăр-ха тесе.
— Халĕ улттăмĕшĕ патне çырас терĕр-и?
— Çук, халĕ ĕнтĕ çыру мар, пьессине çырас терĕмĕр.

## Пĕлтерӳсем

Занятине вăхăтра вăратса яма пултаракан **ăслă автан шыратăп.**
Часси мастерскойĕн директорĕ:
**И. П. Будильник.**

Чашăк-тирĕксене тасатса тăма пит те васкавлăн **пысăк квалификациллĕ ырхан кушаксем кирлĕ.**
Шупашкар. Гостиница çумĕнчи столовăй дирекцийĕ.

Чăважла, тата, вырăзлу çьирма вирэндеген учительзем тубасшăн. Вăлах новеллусем сьирма вирэнттĕр.
**М. Н. Данилов-Чалдун.**

## Пуçа килнĕ шухăшсем

Хăшпĕр поэтсемшĕн сăввисене ăнланмалла çырасси ăнланмалла мар ĕç пулса тăрать.

* * *

Черкке пысăк мар пулин те, унта пайтах çын путса вилнĕ.

## Усăллă канаш

**М. П. рецензента:** эсĕ çырнă чухне пӳрнӳне ĕмме вĕреннĕ пулсан, сайра хутран ăна çукалама та ан ман.

## Хăйне кура мар

М. поэтăн таланчĕ пĕчĕккĕ кăна, анчах хăйне хăй юратасси—Урал тăвĕнчен те пысăкрах.

# Намăс куртăм

Намăсах куртăм çав, çитменнине мĕнле намăс! Каччă ташлама юратакан саввă хĕрĕпе ташлама тухсан ташă пĕлмесĕр намăс курни мар ку, эпĕ хăть ташă ăстиех мар пулин те, арăма килĕшмеллĕх урасене кукăрткалатăпах. Е ӳсĕр пуçпа кил тĕлне пĕлмесĕр пылчăк лупашкинче нăриклетекен сыснапа çĕр касни те мар, эпĕ ĕçекен çын мар, уншăн хăрамаллиех çук. Тĕрĕссипе каласан, эп курнă намăса мана ыр сунакан çын ан куртăр.

Ĕçĕ акă çапла пулчĕ: пĕр вырсарникун, хырăм „туррине" чӳкленĕ хыççăн, хам ĕçлекен шкул умĕнчи тенкел çинче, сар хĕвел айĕнче ларатăп. „Турист" пируса хыпса чĕр вутă хутнă кăмакаран тухнă пек тĕтĕм кăларма тытăнтăм: отпуск вăхăтĕнче историллĕ паллă вырăнсене курса çӳреме кайманнишĕн хам çине тăвăнса ларатăп. Асăрхаман та, умра бригадир Иван Петрович хăйĕн ниçта уйăрми папкине тытса тăрать:

— Манпа пĕрле уй тăрăх çаврăнса çӳреме пымастăн-и?—тет.

Паллах, килĕшрĕм.

Уйхапхинче Хĕрлĕсухал Микула:

— Гулять тума кайрĕç. Ма хĕрсене çаклатмарăр тата—тесе мăшкăласа юлчĕ.

— Телей пулать пулĕ-ха, Наполеонăн хĕрлĕ çынна курсан çапăçусенче телей пулнă,—шӳт туса илтĕм эпĕ.

— Кам-ха вăл Наполеон?—тесе хучĕ Иван Петрович.

Калас пулать, эпĕ специалист—историк мар, анчах вĕреннĕ чухне те историпе лайăхах вĕренсе пынă, историне хама çителĕклĕ пĕлетĕпех тесе шутланăччĕ. Хутла сахал пĕлекен Иван Петровича хамăн пĕлӳпе паллаштарас шутпа эпĕ хĕрсе кайсах Наполеон çинчен, унăн вăхăтĕнчи халăхсем, вăрçăсем çинчен калама тытăнтăм, хăçан, мĕнле авланнисем çинчен те каласа патăм.

— Нимĕçсен 1190 çулта вилнĕ Хĕрлĕсухал, нимĕçле Ротбарт, патша хăйĕн çарĕпе Кифгейзер тăвĕ хушшинче çывăрать текен легенда пур,—тетĕп. Чĕлхен шăмми çук, хăлхине чанк тытса итлекен „студент" умĕнче тем çинчен те сăмах тапранса кайрĕ.

— Ытла та темĕн те пĕлетĕр çав эсир... Вышкă çине улăхса пăхăпăр-ха,—терĕ бригадир, тӳрем вырăнти пĕр пысăк каткă тĕми çине туса лартнă вышка патнелле утса.

— Ха, каткăсем вĕтĕ пулсан та мĕн пек пысăк тĕме туса хунă,—тесе хутăм эпĕ.

Пули-пулмишĕн кулма юратман Иван Петрович кулма тытăнчĕ. Эпĕ вăл ăнланмарĕ пулĕ тесе сылтăм алла револьвер пек туса тĕмĕ çине тĕллерĕм. Ал çупсах кулма тытăннă Иван Петрович манăн тутасем усăнма тытăннине кура калама тытăнчĕ.

— Улăп тăпри, теççĕ ăна. Улăп çăпати çинчи тăпрана силлесе хăварнăран пулнă тетчĕ ман анне. Вăл юмах анчах...

Эпĕ питĕм хĕрелнине сирес шутпа калаçу тилхепине хамăн алла илсе, хальхи Украинăра пурăннă скиф патшисен курганĕсене чакаласа пăхни çинчен кала пуçларăм.

— Халăх пĕр вырăнта пурăнмасть пулĕ çав, пирĕн ялта çĕр çул каярах „кив-вырăн" текен вырăнтан...

— Çапла. Сăмахран, калмăксемех пĕр виççĕр çул каярах çеç Китайран Атăл çине куçса килнĕ.

— Эсир вĕреннĕ çынсем, нумай пĕлетĕр ĕнтĕ (çаплах каларĕ, шеремет!). Чăвашсем халь пурăнакан вырăнта тахçантанпах мар теççĕ. Каласа парха. Çак вырăна килетчен чăвашсем ăçта пурăннă, хăçан, ăçтан килсе вырнаçнă, пурăнăç йăлисем мĕнле пулнă?—тесе хучĕ „студент".

Çав самантра манăн пит туптама хĕртнĕ плуг тимĕрĕ пек хĕрсе кайрĕ, чĕлхе çыхланса ларчĕ.

— Чăвашсем... Манăн шыв ĕçес килет-ха,—тесе тип çырмари çăлтан ĕçес килмен çĕртренех хурăн хуппи куркапа пиллĕк курка ӳпĕнтертĕм.

Эпĕ ыйтăва сирес тесе Тантал шыв ĕçеймесĕр асапланни çинчен, авалхи грексен мифĕсем çинчен, римлянсен йăлисем çинчен сăмах пуçласа ятăм.

— Эсе ман ыйту çине ответ памарăн-ха,—терĕ Иван Петрович яла кĕрсен.

— Чăвашсем пирки вуламан вара эпĕ, Иван Петрович, вуламаллисем питĕ нумай...

Вăл çаплах-ха, анчах ытти халăхсен историйĕ çинчен вĕреннĕ чухне хамăрăн чăваш халăхĕн иртнĕ пурăнăçне пĕлни аван. Эпĕ хам çавăн çинчен санран ыйтса пĕлес тесе пурăннăччĕ. Эсĕ хăть çав ыйтупа кĕнеке тупса пар-ха мана.

— Вуласа ĕлкĕр кăна! Ыранах пыр, çĕклемĕпех йăттарса ярăп,—тесе киле утма тăтăм, анчах Иван Петрович пыллă сăра тутанса пăхма хăй патне кĕме сĕнчĕ. Сурчăк пыр тăрăх ярăна пуçланă пулин те, килĕшмерĕм.

— Эсĕ хăв та чăваш ачиех, чăваш сăрине тиркеместĕн пулĕ вĕт.

О, кам тиркетĕр чăваш сăрине! Эпĕ хăйĕнчен малтан пӳрте кĕрсе тăтăм.

Киле çитсенех чăваш халăх историйĕ çинчен çырнă кĕнекесене шырама пуçларăм. Ал айне „Хĕнхур айĕнче" кĕрсе кайрĕ. Историллĕ поэма! Савăнса кулсах ятăм. „Турă ячĕпе, патша хушнипе" тухса выртрĕ. Анчах кусем бригадир ыйтăвĕ çине ответлемеççĕ-ха. Библиотека кĕрсе тăтăм.

— Мана чăваш халăхĕн историйĕ çинчен тĕплĕнрех хĕн калакан кĕнеке тупса парăр,—терĕм аран сывлăш çаварса.

— Ун пек кĕнеке тухман-ха, ун çинчен сахал тĕпченĕ, сахал пĕлеççĕ,—ответлет библиотекарша мана.

— Мĕн чухлĕ пĕлеççĕ, çавă та çитет. Мĕн те пулин тупса пар,—тетĕп.

— Акă эппин Толстойăн „Петр Первый"—вула, унта „чăваш" тенĕ пĕр сăмах пур, Пушкинăн 5-мĕш томĕнче Пугачев восстанийĕ чухне чăвашсем хушшинче вĕлернĕ пупсен, дворянсен ячĕсене тупма пулать, акă Шторм...

Ку мăшкăла тӳсеймерĕм, истори вĕрентекен Василий Герасимович патне кĕрсе кайрăм.

Вăл эпĕ мĕн çăмалпа килнине пĕлсен, кулма тытăнчĕ, анчах ответ парас вырăнне авкаланма тытăнчĕ:

— Чăваш халăхĕн историне вĕренесси кукăль сăмси çиесси мар, ку серьезнăй вопрос...

— Апла пулсан „серьезнăй вопроса" ответлекен литература кăтартса парăр,—тархаслатăп эпĕ.

— Кхм... литература... языковедсем ҫыркаланисем пур. Халӑх тӑшманӗсем—буржуаллӑ-националистсем вӑл ыйтупа наркӑмӑшлӑ сӗлекисене юхтаркаланӑ...

— Халӑх тӑшманӗсем вӑл ыйтупа усӑ курасшӑн пулнӑ ҫав. Эсӗ, историне чухлакан ҫын, чӑваш халӑхӗн иртнӗ пурнӑҫне тӗрӗс кӑтартса парас тӗлӗшпе мӗн тунӑ-ха? Исто-орик!

Ҫапла ыр сунса тухрӑм ун патӗнчен эпӗ.

Тепӗр ирхине Иван Петрович ман пата кӗнине асӑрхасан, апат ҫисе ларнӑ ҫӗртенех арӑма куҫ хӗссе кӑмака хыҫне чӑмрӑм. Анчах шикленни ахалех пулчӗ, ҫӑмарта илместӗр-и, тесе килнӗ мӗн вӑл. Алӑк хӑлӑпне тытсан ҫапах:

— Илья Тихонч мана валли кӗнекесем хатӗрлесе хурап тенӗччӗ, паян-ыран ҫавах вӑхӑт ҫукха, пӗр ерҫнӗ хушӑра кӗрсе илӗп,—тесе хӑварчӗ.

Халӗ ӗнтӗ Иван Петрович кӗнеке ыйтма килессӗрен шикленсе ҫеҫ пурӑнатӑп. Хӑмӑн тӑван халӑх историне пӗлмесӗр намӑс курни ҫитмерӗ тата кӗнеке тупса паратӑп тесе суйса хисеплӗ Иван Петрович умӗнче айӑпа кӗтӗм. Халӗ ӗнтӗ кағхине те ыйӑх килмест, тӗлӗкре те ҫав ыйтупах муталанатӑп, хӑраса вӑранса каятӑп.

Ҫапла тусӑм, сӗре начар историне кӗрсе ӳкрӗм.

С. Савир.

# Микитапа Марине

Тул ҫутӑлсассӑнах, ирхине
Вырӑн ҫинче выртакан Марине
Ҫумри упӑшки тӑриччен
Труках вӑранчӗ ыйхинчен.
Унӑн упӑшки темскер сӑлтавпа
Ӗнерхи каҫ часах килеймен,
Те ун пирки, те ӗнтӗ урӑхпа—
Ҫамрӑк чӗри вӑркать Маринен.
Марине тӑрса ларчӗ те хускалчӗ,
Упӑшки ҫине пӑхать пӗрмаях.
Акӑ ун чӗри сикме пуҫланчӗ
Хытӑран та хытӑрах.
Микита!—тет Марине,—Микита!
— Мммм,—мӑшлатать леш.—Мӗн тата?
Чим! Кай! Манӑн ыйӑх тӑранман!
— Чим! Кай! Аҫта кай? Пӑх ӑна!
Ма сӑрласа пӗтертӗн пит-куҫна?

Пӗр таса вырӑн хӑварман,
Кама чуптурӑн? Кала!—Чуптуман,
Тупата туршӑн, тупата!—
Тесе ӗнентерет Микита.
— Ак!—тет Марине.—Ак, ак, ак!
Ҫакӑ, ҫак! ҫак, ҫак, ҫак!
Тута сӑрӗ ку! Сӑр, сӑр! Сӑр ку, сӑр!
Услап этем эс, услап, намӑссӑр!
Унтан вӑл сиксе анчӗ те урайне
Чанк, чанк!—ҫупса ячӗ хайхине.

* * *

Хӗрсем! Сисрӗр-и мӗн курчӗ Микита?
Сире эп шӑппӑн ҫеҫ калам, ан шарлӑр:
Арҫынсемпеле вылясса выльӑр та—
Тутӑрсене нихҫан та ан сӑрлӑр!

Н. Евдокимов.




— Эсӗ паян та ӗҫнӗ иккен, сулкаланса ҫеҫ ларатӑн...
— Ахалех айӑплатӑр. Эпӗ ӗҫ вӑхӑтӗнче мар, перерыв вӑхӑтӗнче кайса ӗҫрӗм.

# *Юлташ дневникĕнчен*

Шупашкарта манăн пĕр юлташ пур. Питĕ аван çын, суйма юратмасть. Эпĕ те ăна лайăх пĕлетĕп. Килĕштерсе пурăнатпăр. Чăнах та, иртнĕ хĕлте пĕр пĕчик ĕç пирки кĕçех хирĕçӳ тухса каятчĕ, анчах, пĕр-пĕрне лайăх ăнланнă пирки, хирĕçсе каймарăмăр, çиййĕнчех калаçса татăлтăмăр. Халĕ питĕ аван пурăнатпăр: вăл та ман патăма текех çӳрет, эпĕ те ун патне кашни куллен тенешкелех çӳретĕп.

Иртнĕ вырсарникун та тĕлпулса калаçнă эпир унпа: ман хваттерте лартăмăр. Калаçрăмăр. Пĕр иквиç сехет иртнĕ хыççăн вăл киле тухса утрĕ. Ăсатса ятăм та пӳлĕме кĕтĕм. Пăхатăп та—тĕлĕнсех каятăп: ман сĕтел çинче пĕр ют тетрадь выртать. Тытса пăхатăп—юлташ тетрачĕ. Мĕн тума пăрахса хăварнă вăл хăйĕн тетрадне ман сĕтел çине—калама пултараймастăп. Калаçса ларнă чух, чăнах та, хутсем кăларкаларĕ кăсийинчен. Те çавăн чух тухса ӳкнĕ. Шарламарăм çакăн çинчен юлташа: шыратăр-ха пĕрре ыванниччен!

Мĕнле тетрадь пулнă тесе шутлатăр эсир? Дневник! Чăн та, дневник! Акă мĕн çырнă унта:

## *Виçĕмкун*

... Хĕрлĕ площадь урлă каçса, кĕнеке магазинĕ патнелле пыратăп. Карта çумĕнче пысăк афиша тăрать. „Два вечера балета и цирка"—тесе çырса хунă. Савăнсах кайрăм: Шупашкарта та балетсем кăтартма пуçларĕç вĕт! Васкасах кайса билет илтĕм те, арăма савăнтарас тесе килелле вĕçтертĕм. Каç пулчĕ. Театра кайма вăхăт çитрĕ. Пыратпăр арăмпа театр патнелле: тĕлĕнсех кайрăм—халăх çавтери нумай пырать. Пурте вĕсем балет курасшăн хыпаланаççĕ. Акă, 9 сехет çитрĕ ĕнтĕ, анчах балет пуçланмасть-ха. 10 сехет тĕлнелле аран-аран чаршав уçăлчĕ. Малтан циркла номерсем пуçланчĕç, унтан „Гопак" текен ташша ташласа пачĕç. Ташă хыççăн каллех цирк... унтан „Пойдуль я, выйдуль я" текен ташă... балет пĕтрĕ те.

— Мĕн пулчĕ ку?—ыйтать манран арăм.

— Балет!

— Балет мар, филармони руководителĕсен фокусĕ,—терĕ манпа юнашар ларакан тепĕр çын. Çакăн хыççăн килелле тухса утрăмăр.

## *Ĕнер*

... Паян выходной. Атăл леш енне каяс килмерĕ. Кино кайса курас, терĕм. Сакăр сехетре пуçланакан сеанс валли билет илтĕм те, çӳлелле хăпарас тесе малалла утрăм... Вăхăт 7 сехет те 43 минутчĕ.

— Иртерех-ха, гражданин,—терĕ мана дежурнайсенчен пĕри,—паян сеанс кая юлса пуçланать.

— Хăçантарах килме юрать вара?

— Сакăр сехет çурă тĕлнелле килме пултаратăн.

Атăл хĕрринче çӳрекелерĕм те, каллех çавранса çитрĕм. Вăхăт 8 сехет те 10 минут кăна-ха.

— Ма кая юлтăр!—ятлама пуçларĕ мана хайхи дежурнăй.

— Ара, эсир хăвăр çапла...

— Ан та калаçăр. Кĕртместĕп. Сеанс паçăрах пуçланнă.

— Апла пулсан, директора курасчĕ. Ăçта тупма пулать?

Ман телее тата директорĕ те çавăнтах пулнă. Каласа кăтартрăм директора йĕркипе, анчах ĕнентереймерĕм. Хайхи дежурнăй мана пӳлсех:

— Вăл малтан 7 сехетре килчĕ, çавăнпа эпĕ ăна халех пуçланмасть, тесе каялла ятăм, тесе мана вăрçа пуçларĕ. Директор вара ăнах ĕненчĕ, мана ĕненмерĕ. Мĕн тăвас тетĕн?

## *Паян*

... Ирхи апат тăвиччен кайса хыrăнас-ха, тесе гостиница çумĕнчи парикмахерскойне кайрăм. Нумаях кĕтмерĕм—черет çитрĕ. Пĕр çамрăкрах хĕрача ĕçлекен пукан çине лартăм. Халĕ кăна ĕçлеме пуçланă пулас: пирвайхи хут куратăп. Çӳçе чиперех касрĕ. Сухал хырма тытăнчĕ. Ничево хырать пек хăй, анчах бритва вĕçĕпе сулахай питçăмартине йăшт! тутарчĕ. Паллах ĕнтĕ, юн тапма пуçларĕ. Хырма чарăнмалла пулчĕ. Акă ĕнтĕ пуçларĕ ман мастер аппаланма: шывпа та çуса пăхать, иодăпа та тĕксе пăхать, мамăкпа та пусса пăхать, анчах юн чарăнмасть.

— Çапах та, мĕншĕн касрăр-ха эсир?—тесе ыйтрăм эпĕ мастертан.

— Ошибка.

— Куратăп, мĕнле ошибка.

— Эсир хăвăр вара пĕр йăнăшсăрах ĕçлетĕр-и?

— Пулкалаççĕ, анчах кун пеккисем пулман.

— Подумаешь,—терĕ ман мастер,—хăйĕн пичĕ яка мар та мана тиркет тата.

Çакăнпа юлташăн дневникĕ вĕçленет.

Р. М. çырса илнĕ.

## *Хăй те...*

— Ну, мĕнле, ĕнер занятине вăхăтрах çитрĕн-и?

— 25 минут опоздать турăм вĕт.

— Директор мĕн тет?

— Директорĕ хăй те ман хыçран 5 минутран тин çитрĕ те...

## Литература хыпарĕ

Иван Малгай поэтăн черетлĕ сăвă кĕнеки тухрĕ. Çĕнĕ кĕнеке юлашки çулсенче поэт пысăкран та пысăк çитĕнӳсем тунине палăртать: малтанхи çулсенче Малгай пĕр строкара икĕ хут çеç „урра!" кăшкăрнă пулсан, халĕ çур строкарах тăватшар „урра!" тĕл пулатпăр. Чăвашиздат редакторĕсем ырланипе хавхаланса, поэт çине тăрсах хăйĕн суйлав „урра!"-сен сборникне хатĕрлеме тытăннă. Авторитетлă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, пулас сборникĕн ячĕ „Канми карма карланкăм, хытăрах кăшкăр" ятлă пулмалла.

# Призыв пунктӗнче

Н. Сверчков ӳкерчӗкӗ.




— Ытла ан хуйхăр. Сирӗнне те илӗҫ-ха.
— Темӗн ҫав. Ҫынсен унта значокӗсем ум тулли, пирӗн пур—пурӗ те виҫӗ ҫеҫ.

# САВУЛККА

## (НОВЕЛЛА)

1940 çул, кăрлач уйăхĕн вĕçĕнче, эпир Енкасси колхозĕн хĕрлĕ ялавлă виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ патĕнче лартăмăр.

Çумаркка бригадирăн сăмаххисем шыв пек юхса пычĕç.

Сăмах-юмах тĕрленнĕ май манăн умма килсе тухса тăчĕ пĕр кăсăк кăна калав. Вăл çакăн пекрех:

Енкасси ялĕнче Савулкка ятлă пĕр йĕкĕт çын пурăннă. Çутçанталăк ăна пур енчен те тĕрĕс-тĕкĕл туса янă. Тӳпери хĕвел калама çук илемлĕ. Хĕвел çине пăхса савăнмашкăн Савулккан пулнă пĕр мăшăр кăвак куç. Шăпчăк ирпе те, каç кӳлĕм те ытарма çук лайăх юрланине пурте ĕнтĕ пĕлсе тăраççĕ. Уй юррине илтсе киленме Савулккана „турă пӳрнĕ" пулнă çивĕчрен те çивĕч хăлха. Хăмăш пек, яштака пӳ-си пулнă унăн, анлă кăкăр. Чукмар пек çирĕп аллипе тĕлĕнтернĕ вăл Енкасси халăхне, упа хĕвтийĕпе.

Анчах, çапла пулин те, Савулкка „турă çырнипе" сапăр пуласшăн пулман. Унăн канăçсăр чĕри мĕн пуррипе кăна çырлахайман.

Ăслă, вăйпитти, сывлăхлă пулнă Савулкка. Анчах этемĕн вепси тăранайман, тесе ахальтен каламан пулĕ ахăр авалхи ватăсем. Çав чăн сăмах Савулкка тĕлĕшĕнчен лăп та шăп тĕрĕс килсе тухнă. Канăçсăр пулнă Савулкка кăмăлĕ, пысăка хапсăннă унăн пилĕ: апат çиме-мĕне ларсан, вăл çиесшĕн пулнă мĕн тăраниччченех, ĕçме тăрсан—ĕçесшĕн пулнă мĕн хырăмĕ сарăлса кайиччен. Пĕртте хăй пеккисем манерлă пуласшăн пулмантăр çав Савулкка этем. (Кам кунта айăплă —ун çинчен Çумаркка старик асăнасшăн пулмарĕ, эпир те тӳрĕ туса чăрманмăпăр). Пĕр 30—35 çула çитнĕ çĕре, çапла вара, пирĕн Савулкка пĕтĕмпех пăсăлса каять. Туррине те ĕненми пулать вăл, хăйне хăй те юратма пăрахать. Явăçса каять тасти хăяматри усал-тĕселсемпе.

И вот, шăп çав вăхăтра ĕнтĕ пĕрре тĕлĕкре ăна шап-шур сухаллă улăп курăнать. Курăнать, тет те, вăл çапла калать иккен: „Эсĕ, Савулкка хăта, телейсĕр. Сана, çын çине кĕрес тесессĕн, мул кирлĕ, сан килӳнта паянхи куна аллă пус кĕмĕл те çук. Эсĕ, Алпастă чунĕ хыпарланă тăрăхран, çийӳпепийӳпе те, ăсупа-хакăлупа та чăлах-чĕлĕх. Анчах эпĕ сана хĕрхентĕм. Эпĕ сана пулăшăп. Эпĕ авалхи çĕрме пуян карчăк еткерĕ. Манăн алăмра пĕтĕм тĕнче пуянлăхĕ, эпĕ мул хуçи. Ĕнтĕ эпĕ ватă, манăн сухалăм сĕт пек шурă, ĕнтĕ манăн срук тухрĕ. Çавăнпа та эпĕ кĕçĕр санпа курса калаçасшăн пултăм. Итле телейсĕр чура, тăнла. Манăн пĕр сăмахăма та ан ман.

Çак ялтан инçех мар пĕр вырăн пур. Çулла пулсан ун çине вилшыв ӳкмест, хĕлле çитсен вăл çĕрте юр тăмасть. Эсĕ çав вырăна шыраса туп.

Вилшыв ӳкмен вырăна шыранă чухне эсĕ çĕр те пĕр тĕрлĕ асап курăн. Сан çулна шухă арçурисен ешкерĕ пӳлсе лартĕ, сан çийĕнте ылханлă этемсен йĕтĕм чунĕсем ахăрашĕç. Вĕсем санпа çулăхас тесе юри йăк шырама тухнă пулĕç. Эсĕ вĕсем çине асту ан пăх. Пĕлĕт хушшинчен вĕçсе анĕç кĕрен çунатлă пирĕштисем, вĕсем сан умăнта вĕçсе пынă чухне сана калла çавăрăнма тархаслĕç, сăхсăхма ӳкĕтлĕç, çĕр те пĕр тĕрлĕ сăмах тупса, усала чунна сутăтăн, тесе хăратĕç. Тамăк вучĕпе, этем ывăлĕ-хĕрĕ çĕклейми çылăхпа, турă ылханĕпе çӳçентересшĕн пулĕç сан чунна. Эсĕ вĕсен сăмаххисене хăлхуна ан чик.

Вилшыв ӳкмен вырăн Хырпуç вăрманĕнчи çитмĕл çиччĕмĕш юман патĕнчен, брат-братти ларакан икĕ ватă йывăç хушшинчен пăхсан питĕ лайăх курăнĕ. Эсĕ çав вилшыв ӳкмен вырăна туп та, чăлт хĕрлĕ автан пусса, çĕре алтса чик. Вара, тамăк пек, çухăрашса, сăртсене-тусене кисрентерсе, Атăл шывне хумхантарса, сан патна йăтăнса килсе тухĕ Ашапатман карчăкăн пиншер çул упранса пурăннă хăватлă мулĕ...

Старик çапла калань, тет те, куç умĕнчен çухалнă, тет.

Савулкка çав кун кунĕпе лара-тăра пĕлмен, унăн ăшĕ те пăшнă, пуçĕ те çавăрăннă. Ашапатман мулĕ ăна хăратнă та, çав вăхăтрах илĕртнĕ те.

Пĕр кун кунĕпех шухăшласа çӳренĕ вăл, тепĕр кунне те çав шухăшах канăç паман ăна. Виççĕмĕш кунĕнче вăл лайăх кăна апатланнă та, хĕрлĕ автанне михĕ ăшне чиксе, Хырпуç вăрманĕ еннелле утнă.

Пĕр сехет çӳренĕ вăл вăрманта йĕкĕреш йывăçсене шыраса, икĕ сехет, виççĕ, тăваттă... Каç та пулнă. Анчах çапах тĕлĕкре курса калань улăп йывăççисене тупайман.

Иккĕмĕш кунĕнче ирхине ирех, кăвак çутăпах тăнă. Каллех ĕнерхи автаннех михĕпе хулхушшине хĕстернĕ те вăрмана вĕçтернĕ.

Иккĕмĕш кунĕ те малтанхи пекех ăнăçсăр иртнĕ. Анчах виççĕмĕш кунĕнче Савулкка çав йывăçсене шыраса тупать-тупатех. Вилшыв ӳкмен вырăна та вăл çав кунах çитсе курать. Çĕр айне пусса чикет хĕрлĕ автанне... Çĕр айĕнче ахăрашнă, улашнă сасăсене те илтет. Анчах мулĕ пирвайхи кунĕнче тухмасть. Çав кун Савулкка çĕрĕпех куç хупман. Мулĕ тухсан халь-халь ярса тытассăн пулса, аллисене сарса кĕтсе ларнă вăл хĕрлĕ автан масарĕ çийĕнче.

Тепĕр кунне килне килсе арăмне яшка пĕçерттерет те, каллех чавтарать паçăрхи вăрттăн вырăна.

Çапла пĕр кун иртет, иккĕ, виççĕ. Хайхи пирĕн йĕкĕт чут çеç вĕт ăсран тайăлмасть. Тăваттăмĕш кунĕнче çеç вăл хăй пĕчĕк ачалла айкашнине ăнланса илет. Тин...

Кун хыççăн вăл çынсемпе никампа калаçми пулнă вара. Пуçне сĕнксе, темĕнле, халăх умĕнче пысăк айăп тунă çын пекрех çӳренĕ.

Нумай та вăхăт иртмен ак хайхи мужик ялтан тухса çухалнă та...

Эпĕ çак „историне" хам сăмахсемпе сăнлатăп. Çумаркка юмахçăн сăмах хутаççийĕ маннинчен пысăкрах пулчĕ, унăн чĕлхи-çăварĕ маннинчен çепĕçрех те, çавăрăнăçуллăрах та тухрĕ.

Эпĕ çак юмаха янă чухне Çумаркка старике, ыттисем пекех, куçĕнчен пăхса, ним чĕнмесĕр итлесе лартăм. Мĕншĕн тесен, çын каланă вăхăт-

ра шăп ларманни—вăл, колхоз йăли тăрăх, этеме сума суманни, ăна этем вырăнне картманни пулса тухать.

Сăмах çăмхи çавăраннă хушăра ман умма Савулкка мĕлки таçтан, тĕксĕм аваллăхран çавăрăнса тухса куç умĕнче чылайччен сĕмленсе тăчĕ. Эп çав тĕветкеллĕ йĕкĕте, аслашшĕсем мехелне хирĕç кайса, усал-тĕсел мулне ăмсаннăскере, çĕнĕрен чун вĕрсе кĕртсе, хам асăмра çĕç пулин те, пурăнтарасшăн пултăм. «Ха,— терĕм эпĕ хама хам, çав хĕрўллĕ чăваша фантаçийĕмпе мĕн пĕлнĕ пек пит-куçлă, патмар кĕлеткеллĕ чăмăртаса туса,—ха, епле хăяйнă-ши вăл чунне сутма! Снаш, çав тарăхнă пулать ĕнтĕ—ешĕл хăй туррине хăех хирĕç кайнă пулсан».

Ман кăсйари пĕчĕк сехет çурçĕр иртсе вунвиç минут çитни çинчен пĕлтерчĕ. Кĕтесри радиохыпарçă, такам çине çилленнĕ упа пек мĕкĕрсе тăчĕ-тăчĕ те ух! тесе кăшкăрса ярса сасартăк пикенсех чăвашла юрлама тытăнчĕ. Çумаркка старик хăй сăмахне пўлме тăнă „çичĕ ют“ çине сивĕ куçпа пăхас вырăнне—ăшшăн кăна кулса пăхса илчĕ те, сассине пасăрхинчен сахалтан та пĕр ик хут хăпартрĕ.

— Кайран çав Савулкакана, пĕр çичĕ-сакăр çул иртсен, кăркăс çĕршывĕнче, улмачăпар тимĕр-кăвак юланут çине утланса, симĕс çеçенхир тăрăх, арçури пек, шăхăрса кустарнине курнă.

Ун куçĕнче иксĕлми хăюлăх çунса пынă. Ун аллинче вутлă хĕç вылянă. Савулкка хыçĕнченех, çил кăларса, анлă çĕре кисрентерсе, унăн юлташĕсем, юланутлă йĕкĕтсем, пынă. Вĕсем кăкăрĕсем çинче кашнин хĕрлĕ хăю ялкăшнă, хĕрлĕ хăю—хĕрлĕ партизансен палли...

Унтан каллех пĕр çул иртнĕ. Иртнĕ икĕ çул, виçĕ çул... Савулкка яла таврăннă.

— Снаш, вăл ялтах,—тесе ыйтас килчĕ манăн, Çумаркка калавçă çак тĕле çитсен,—ялти колхоз маттур, çыннисем саттур. Апла тăк вăл шыранă мулне тупнах.

Анчах Çумаркка эпĕ мĕн ыйтасшăн пулнине сиссе-и ĕнтĕ, сисмесĕр-и, хăех çавăн çине куçрĕ.

— Ялта колхоз çуратнă. Ял çĕнĕ меслет тупнă, çĕнĕ пурнăç тума пикеннĕ.

Çĕнни Савулккана, Ашапатман карчăкăн мулĕ пекех, хăратнă та, çав вăхăтрах илĕртнĕ те. Анчах çапах та вăл ўкĕнĕçлĕ ан пултăр, тесе колхоза илме ыйтса хăй аллипех заявлени çырса леçсе панă. Çакăнтан вара унăн пурнăçĕ пачах тĕлĕкри пек, улăп каланă пек пуçланса каять. Кашни çулĕ уншăн ырлăх кўме тытăнать. Кашни çĕнĕ çулĕ çĕнĕ савăнăçпа хапăллать. Малтанхи çулĕнче унăн пўлмийĕ ылттăн тулăпа тулса хăпарать. Иккĕмĕш çулĕнче тайлăк-тайлăк çурчĕ халапри кермене çавăрăнать. Виççĕмĕшĕнче—картине пăлан пек ĕне килсе тăрать.

Пĕрремĕш çулĕнче ачисем кулма вĕренеççĕ, иккĕмĕш çулĕнче çумри мăшăрĕ. Виççĕмĕш çулĕнче пĕр хĕвеллĕ ирпе вăл хăй савăннипе чи пуçласа ахăлтатса кулса ярать—«ак ăçта иккен вăл чăнчăн мул, я!»

Çумаркка çапла каларĕ те, икĕ ĕрет, таса вĕтĕ шăнкав чулĕсем пек, шăлĕсене кăтартса, ыттисем çине савăнăçлăн пăхрĕ.

— Мĕскер вăл Ашапатман карчăкăн çук мулĕ çак колхоза пăхнă çĕрте! Мĕн вăл пĕччен савăнăç çак ушкăнлă савăнăç çумĕнче... я! Эп тĕрĕс-и калатăп, мухтавлă хăнасăм?.. Тоттă.

Çакăн хыççăн Çумаркка Савулккан хальхи хуйхипе хальхи савăнăçĕ çинчен тĕплĕн паллаштара пуçларĕ.

— Савулккан ултă ывăл. Пĕри инженера вĕренет, тепри тухтăра. Виççĕмĕшĕ çĕнтерейми çар паттăрĕ, ун хыçĕнчи—комсомол ячейкин секретарĕ, пиллĕкмĕшĕ çĕнĕ шкулти ударник-пионер, а чи кĕçĕнни—ашшĕнчен çуллен преми илсе пыракан октябренок. Ывăлĕсем ултăшĕ те орденлă республикăн тава тивĕçлĕ гражданĕсем. Вĕсене хурлама çук. Айăплама тивĕç мар вĕсене çуратса пăхса ўстернĕ хисеплĕ амăшне те. Анчах Савулкка çапах та хăй мăшăрĕпе «нидувульни» (Çумаркка сăмахĕ). Савулккан ун çине кăшт çеç пулсан та çапах та çилли пурах. Савулкка хăй килĕнче хĕр тĕсне курасшăн, а арăмĕ унăн хĕрсене пачах çурата пĕлмест. Ывăл çине ывăл, ударник çине ударник, а ударници пĕртте çук. Çитменнине тата юлашки виçĕ çул хушшинче ударникĕсене те çуратма манса кайрĕ...

Кунпа пĕрлех вăл тата ывăлĕсем пĕри те писательсен союзне кĕме тăрăшманшăн та сахал мар пăшăрханать. Унăн «мул» ятлă калав çыртарас килет. Унта вăл ĕлĕкхи ултавлă пурнăç, авалхи харампырлăх çинчен чăн сăмах калаттарасшăн. Унта вăл этем хăй телейне çĕр айĕнчен тухасса кĕтсе лармалла марри çинчен, айван Савулкка пек ăна таçти хăяматри çĕршыв тăрăх шыраса сĕтĕрĕнсе çўреме кирлĕ марри çинчен, телей этемре хăйĕнче, телей колхозра иккенни çинчен, телей большевиксем кăтартнă пек тусан çеç пулма пултарни çинчен ĕненўллĕ те сăнлăхлă сăмахсемпе тĕрлеттересшĕн. (Çаксене вăл хăй çыраймасть. Вăл колхоз ĕçĕнче—пушанаймасть. Алли ури те унăн кў ĕçре çавăрăнаймасть.) Çавăнпа вăл пăшăрханать те.

Ку хуйхă уншăн пысăк, Анчах унăн хуйхи кунтан та пысăкраххи пур—Савулкка ĕнтĕ 51-пе пырать. Унăн сухалĕсем çинче кăвак пĕрчĕсем те хушăран палăрма тытăннă ĕнтĕ. Савулкка, çĕнĕрен çамрăкланса, сахалтан та тата пĕр икĕ пуруй çынсен ĕмĕрне пурăнасшăн. Ăна халь пурăнма нихçанхинчен меллĕ пек туйăнать. Анчах колхоз та, ăслăлăх та халлĕхе Савулккана çамрăклатма пултараймасть-ха. «Куншăн та пăшăрханмасан хальхи пурнăçпа пурăнакан ват старикĕн мĕншĕн-ха тата пăшăрханас,—тесе тўлесе хучĕ Çумаркка хăй калавне.—Вĕт пурнăçĕ пурнăçла. Пурăнас килет халĕ кашнин. Вашаватлă çĕрĕ Савулккана—хăпартупа члслать. Ăратлă ĕни—тутлă сĕт ĕçтерет. Виçĕм çул колхозран парнеленĕ патефонĕ Савулккашăн чăвашла кăмăллă юрăсем юрлать. Клубĕ уншăн ятарласа лайăх спектакльсем лартса парать. Мĕншĕн-ха унăн ытларах пурнасси ан килтĕр, я...»

Çакăн пекрех пулчĕ Çумаркка старик калавĕ Вăл каласа пĕтерсен, эпĕ ыран ирпех каяс мар ĕнтĕ, Савулккапа хăйĕнпе курса калаçасах пулать, тесе шухăшласа илсе, тепĕр хут пирус туртса ятăм та ыйтрăм.

— Так, так,—терĕм,—а курма пулать-ши манăн çав телейлĕ старике?

Çумаркка калавĕ юмах пекрех тухрĕ. Кун çине тата калав пĕтиччен эпир калавçăпа пĕрле 4—5-шер чăплашкă сăрине те астивме ĕлкĕрнĕччĕ. Çумаркка, паллах, самаях хĕрсе çитрĕ. Анчах,

çапах та эпĕ ун сăмаххисене суя теме пĕр сăлтав та тупаймарăм. Çавăнпа та Çумаркка эпĕ ыйту парсанах ахăлтатса кулма тытăнсан, ун çине тĕлĕнерех пăхрăм.

— Мĕн-ха уншăн кулмалли пур,—тесе шухăшларăм эпĕ.—А, тен, чăнах та вăл юмах çеç...

Эпĕ Çумарккапа пĕрле кулса ярас та, çапла вара хам ыйту панине шӳте кăларас, тесе çеç йышăннăчĕ—çав вăхăтра калавçă сасартăк кулма чарăнса мана тавăрса та хучĕ:

— Курма пулать-и ăна тетĕн эс, ятлă хăнаçăм. Пулмасăр, пулать, пулать. Вăл çак колхозрах, хĕрлĕ ялавлă виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ. Ун ячĕ Савулкка, хушамачĕ—Çумаркка.

Гр. Краснов.

# ИККĔШĔ ТЕ ПУÇ ХЫÇАÇÇĔ

Н. Сверчков укерчĕкĕ.



**СТАХАНОВЕЦ.** Ăçта кăна вырнаçтарса çитерем?



**КАХАЛ.** Ăçтан кăна йӳнеçтерсе çитерем?

## Ăçтан паллă

— Хĕле кĕретпĕр иккен.
— Часах мар та-ха.
— Мĕн часах марри, магазинсенче сандалисемпе улăм шлепкесем сутма тытăннине асăрхаймарăн-им!

## Пĕлĕш продавец

— Эсĕ ку япалана хăш магазинта туянтăн?
— Магазинта мар...
— Ăçтан тата?
— Леш кĕтесри магазинра продавец знакомăй та...

*ЧИКАРКОВ*

# „ХЁВЕЛ ШЕВЛИСЕМ“

**ВЫЛЯКАНСЕМ:**

1. Доктор Степан Березкин.
2. Доктор Клавдия Новикова.

НОВИКОВА. Степа... чунăм... Урăх пĕрне пĕри кураймастпăр эппин... тĕлĕнмелле... кулянтарать-çке ку...

Да... Пиллĕк çул каялла килтĕм эпĕ кунта пĕчĕк чемодан йăтса... Халĕ... Юрĕ, япаласене часрах пуçтарас... Ыран... ыран эпĕ кунта пулмастăп... Так... кусем манăн кĕнекесем, кусем—Степăн... кусем—манăн, кусем—Степăн .. Сакăр кĕнеки унăн ман патăмра... Темле хăйне хăй астума пĕлмен çын вăл. Икĕ сехетре кĕрсе тухма пулчĕ хăй. Халĕ ав виçĕ сехет çурă çитрĕ. Паллă ĕнтĕ... манчĕ... Неужели килмест вăл... (Пауза хыççăн) Ку чемодана мĕнле йăтса кайăп-ха эпĕ... Епле йăвăр... Икĕ пăт пулĕ... (Алăкран шаккани илтĕнет) Çитрĕ... Çитрĕ! Манман! (хыттăн) Кĕрĕр!

(Березкин кĕрет)

БЕРЕЗКИН. Сывă-и, Клава, тĕрĕссипе каласан, сана сывă-и, доктор, темелле те ĕнтĕ...

НОВИКОВА. Сывă-ха, доктор. Эпĕ сана килместĕн пулĕ тесе шутларăм...

БЕРЕЗКИН. Çу-ук... килтĕм ак...

НОВИКОВА. Килтĕн пулсан—хăна пул. Лар!

БЕРЕЗКИН. Эпĕ пĕр минутлăха кăна кĕтĕм, сана кансĕрлесе тăмăп.

НОВИКОВА. Эсĕ мана кансĕрлеместĕн... Акă кусем санăн кĕнекусем. Степа, пулăш-ха чемодана питĕрме.

БЕРЕЗКИН. (Чемоданне питĕрме пулăшса) Хăçан каятăн?..

НОВИКОВА. Ыран ир. Сакăр сехет те аллă пиллĕк минутра.

БЕРЕЗКИН. Манăн поезд сакăр сехет те 15 минутра каять. Вăл та ирпе; Клава, эсĕ... эс назначени ăçта илтен?..

НОВИКОВА. Курска. Эсĕ ăçта?

БЕРЕЗКИН. Эпĕ—Смоленска.

НОВИКОВА. Эпĕ Курскри Травматологи институтĕнче ĕçлеме пуçлатăп.

БЕРЕЗКИН. Сана травматологи пуринчен ытла интереслентерет-и?..

НОВИКОВА. Да... (Савăнăçлăн) Шутла-ха эсĕ... ăнсăртран сиксе тухнă инкек-синкек тепĕр чухне çынна тем пек пысăк сиен туса хума пултарать. Вăл инвалид пулса юлать... Уншăн вара пурнăç та хăй илемне çухатать... Çакăн пек чухне ĕнтĕ эпир, травматолог-врачсем, пулăшатпăр. Çынна тепĕр хут пурнăçра савăнса пурăнма май паратпăр.

БЕРЕЗКИН (Пӳлсе). Эсĕ калама çук интереслă ĕç суйласа илнĕ. Ку ĕç мана та хумхантарать...

НОВИКОВА. Мĕн тетĕн?

БЕРЕЗКИН (Хăш! сывласа). Калама çук чаплă ĕç вăл юн ярасси. (Хĕрсе кайса). Юн ярса çын пурнăçне çăлса хăварнине эпĕ практикăсенче çӳренĕ чух питĕ нумай курнă...

НОВИКОВА. Ку ĕç мана та хумхантарать...

БЕРЕЗКИН. Мĕн тетĕн?..

НОВИКОВА. Калама çук чаплă ĕç вăл юн ярасси. Степа, а эсĕ асна илĕн-и кайран института, профессорсене, юлташсене?..

БЕРЕЗКИН. Асилмесĕр вара... тата... тата... нихçан та асран ямастăп...

НОВИКОВА. Мĕн тетĕн?

БЕРЕЗКИН. Университета, юлташсене...

НОВИКОВА. Эпĕ те. Эпĕ те нихçан та асран ямастăп университета, юлташсене... Пиллĕк çул каялла çакăнта Клава Новикова килнĕ, халĕ ак доктор Клавдия Ивановна тухса каять...

БЕРЗКИН. Анне ялтан ман пата çыру сырчĕ... конверчĕ çинче «Доктору Березкину Степану» тенĕ, «доктору» сăмаха пысăкпа çырнă... карчăкшăн савăнăç ĕнтĕ!

НОВИКОВА. Доктор, чей ĕçес килмест-и?..

БЕРЕЗКИН. Çук, спасибо, доктор.

НОВИКОВА. Ан кала ĕçес килмест тесе, ĕçерха... Чайник часах вĕресе тухать... Эсĕ унччен çакă калава вуласа тух-ха, питĕ лайăх çырнă, эпĕ халех...

(Тухса каять)

БЕРЕЗКИН. Ыран Клава Курска тухса каять. (Салхуллăн). Эпĕ ĕнтĕ ăна урăх тен кураймăп та... (Çĕкленсе). А мĕншĕн-ха манăн та Курска каяс мар ĕçлеме!?. Алло!.. Два—одиннацать—двадцать девять... Да... Кадрсен секторĕ-и? Начальнике, Денисенко юлташа чĕнĕр-ха тархасшăн. Денисенко юлташ, сывă-и?.. Смоленска ĕçлеме кайма назначени илнĕ врач Березкин калаçать... Денисенко юлташ, ман сиртен ыйтса пĕлмелли пысăк ыйту пур... Эпĕ сиртен ĕçлеме мана Курска куçарма ыйтасшăнччĕ. Да, Курска... Мĕншĕн тетĕр-и? Гм... юратса пăрахрăм... то-есть эпĕ интересленме тытăнтăм травматологипе. Тархасшăн эпĕ ыйтнине пурнăçлăрсамччĕ... Да, да... Березкин. Смоленска назначени пана .. Курска куçарма ыйтатăп... Анланатăп эпĕ. Пĕр хуларан тепĕр хулана куçасси çăмăл ĕç маррине лайăх ăнланатăп эпĕ, Денисенко юлташ... Анчах манăн... сăлтавсем çавнашкал... Тархасшăн, Денисенко юлташ, питĕ ыйтатăп эпĕ сиртен... Мĕн, мĕн тетĕр?.. Гм... Вăраха каймĕ-ши... Да... Так... Так... Ага... урăх çын тупăнать пулсан... Смоленска кайма килĕшекен врач тупăнсан... Вара май пулайĕ-ши эпĕ ыйтнине пурнăçлама?.. Тарахасшăн!.. Юрать .. Эпĕ... эпĕ сире шансах тăрăп, кĕтĕп, звонить тăвăп... Тем пек, тем пек тавтăвăтăп. (Пауза). Курскра шăпчăксем лайăх юрлаççĕ, тет... Питĕ аван çын вăл Денисенко юлташ, ăнланаканскер...

НОВИКОВА. (Пырса кĕрет). Ну, куртăн-и, епле час вĕресе тухрĕ... халĕ чей ĕçĕпĕр. Ах, чей пĕтнĕ тата... Кайса килем-ха, эпĕ хăвăртах...

БЕРЕЗКИН. (Пӳлсе) Клавочка, пĕрмаях эсĕ тăрăшатăн, эпĕ чейне чупса кайса илем...

НОВИКОВА. Юрĕ эппин... Аллă грамм грузинскине илсе кил. Тăхта-ха, укçа илсе кай...

БЕРЕЗКИН. Мĕн укçи!... Кирлĕ мар... Хур вĕсе-

не каяллах сумочкăна... çапла, аллă килограмм грузински чей илсе килмелле?

НОВИКОВА. Килограмм мар, грамм. Ухмаха ертĕн пуль... Аллă грамм çеç...

БЕРЕЗКИН. Юрать... Эпĕ хăвăртах... (Чупса тухать).

НОВИКОВА. Ыранхи кун, çитменнине шăпах пĕр вăхăтра, эпир иксĕмĕр те икĕ еннеле саланса каятпăр, урăх нихçан та, нихçан та пĕрне-пĕри кураймастпăр... (Шухăшлать). Пĕр тесен, мĕншĕн пултараймастăп пулать-ха эпĕ Смоленскра травматологи ĕçĕпе ĕçлеме?.. Паллах, пултаратăп!.:. Два—одиннадцать—двадцать девять... Кадрсен секторĕ... Денисенко юлташа чĕнĕр-ха тархасшăн... Денисенко юлташ, кăна врач Новикова калаçать... Манăн сиртен ыйтса пĕлмелли пысăк ыйту пур... Ĕçĕ акă мĕнре... эпĕ Курскине кайма назначени илнĕ... Анчах эпĕ Смоленска куçарма ыйтатăп... Мĕншĕн тетĕр-и? Гм... Мĕншĕнне эпĕ сире тӳррипех калăп.. Ну, вообщем, сăлтавĕ хамра çеç те... Мĕскер терĕр? Килĕшетĕр?.. (Тĕлĕнсе) Сирĕн шăпах ваканси пушаннă? Апла эсир эпĕ ыйтнине пурнăçлатăр? Ăнчĕ ĕç çапах! Тавтапуç куншăн! (Савăнăçлăн). Тавтапуç, пысăк тав... Да, да... ыранах каятăп... Сывă пулăр... Епле ырă çын ку Денисенко юлташ... пурне те пĕр секунд хушшинчех туса хучĕ...

Итак! Смоленска каятăп! Ура! Смоленска каятăп... Эх, Степа тĕлĕнет ĕнтĕ... Ку вăл уншăн сюрприз пулать... Анчах савăнĕ-ши вăл? (Шухăшлать) Савăнĕ-ши е... (Березкин пакетсем тата чечексем йăтса кĕрет).

БЕРЕЗКИН. Акă чей.

НОВИКОВА. Чечексем... Ку чей пулать-и вара?

БЕРЕЗКИН. Акă чей... А ку чей çине валли... ак ку тата.

НОВИКОВА. Ну, ку вара?..

БЕРЕЗКИН (Пӳлсе). Ан çилен, эпĕ ăнсăртран туянса пăрахрăм...

НОВИКОВА. Ăçтан çиленмесĕр тăрас-ха... Эсĕ çур магазина йăтса килнĕ... Урăх кун пек ан ту...

БЕРЕЗКИН. Урăх ун пек тума май килмест ĕнтĕ... эпир урăх пĕрне пĕри кураймастпăр вĕт... Да... Итле-ха, Клавочка, сана унта коридорта... кӳршĕсем шыратчĕç...

НОВИКОВА. Мана?.. Мĕншĕн-ши?

БЕРЕЗКИН. Пĕлместĕп...

НОВИКОВА. Тĕлĕнмелле... Кама кирлĕ пултăмха вара эпĕ?.. (Тухса каять).

БЕРЕЗКИН. Два-одиннадцать-двадцать девять... Денисенко юлташ... кăна каллех эпĕ звонить турăм-ха... Врач Березкин... Ну, мĕнле? Да, да... Эпĕ ыйтнине пурнăçланă тетĕр-и?.. Смоленска кайма килĕшекен врач тупăнчĕ-и?.. Питĕ лайăх! Так... Эпĕ Курскине каятăп ĕнтĕ апла пулсан?.. Питĕ лайăх, питĕ лайăх! Да, да... ыранах каятăп... Сире, Денисенко юлташ, пысăк тав. Сывă пулăрха... Так... (Савăнăçлăн). Каятăп! Курска каятăп!.. Калама çук чаплă работник ку Денисенко юлташ, лайăх çын пулас вăл...

(Новикова кĕрет).

НОВИКОВА. Степа, мана никам та чĕнмен-çке...

БЕРЕЗКИН. Чăнах-и?.

НОВИКОВА. Чăнах, никам та чĕнмен. Эсĕ сухалса кайрăн пулĕ... Рассеянный с улицы Бассейной... Кил, чей ĕçме лар. Эсĕ çăрине çак юрататăн-и ĕçме, шĕввине-и?..

БЕРЕЗКИН. Пурпĕрех.

НОВИКОВА (Стакан парать). Акă, доктор, ĕçĕр! Эпĕ радио калаттарам-ха.

(Радио тăрăх юрлани илтĕнет).

БЕРЕЗКИН. Спасибо... доктор. Пĕлетĕн-и-ха эсĕ—практикăра пулнă чух эпĕ операцисене хам тĕллĕнех тăваттăм...

НОВИКОВА. Чăнах калатăн-и?

БЕРЕЗКИН. Чăн калатăп. Чирлĕ çынна каçхине илсе килчĕç, ăна хăвăртрах аппендицитран тумалла пулнă... Дежурный врач урăх ĕç тунă вăл вăхăтра. Эсĕ шутласа та илеймĕн эпĕ ун чухне мĕн пек пăшăрханнине... Пĕрремĕш операци!. Операцисем тумалли сĕтел çинче çамрăк та хитре хĕр выртать...

НОВИКОВА (Пӳлсе). Хитре тетĕн?..

БЕРЕЗКИН. Питĕ хитре хĕр... Мĕн пур илемлĕ те телейлĕ тата савăнăçлă пурнăçсем курăнса тăнă ун умĕнче... Анчах вăл пурăнассипе пурăнмасси йăлтах манран, ман пĕлӳсенчен килнĕ. (Пауза хыççăн). Операци хыççăн чирлĕ çын питĕ лайăх сывăрчĕ, анчах эпĕ начар сывăртăм...

НОВИКОВА. Мĕншĕн начар сывăртăн вара эсĕ?

БЕРЕЗКИН. Операци мĕнле иртни çинчен шухăшласа пăшăрхантăм...

НОВИКОВА. Мĕнле иртрĕ вара?

БЕРЕЗКИН. Ăнăçлă... Чирлĕ çын сывалчĕ...

НОВИКОВА. Тав турĕ-и вара вăл сана?

БЕРЕЗКИН. Тав турĕ... ăшшăн та чĕререн тав турĕ... Нимрен ытла каччи, çав хĕре çураçса хунă йĕкĕт хытă тав турĕ... çавтери савăнăç пысăк пулчĕ.

НОВИКОВА. Паллах ĕнтĕ... Илтме те кăмăллă... эсĕ икĕ çамрăка телейлĕ пулма пулăшнă... Тепĕр стакан тултарса парас-и?

БЕРЕЗКИН. Çитĕ, урăх ĕçес килмест... (Ура çине тăрать). Клава, эпĕ... эпĕ çула пуçтарăнма каятăп...

НОВИКОВА. Эсĕ халех каятăн-и?

БЕРЕЗКИН. Каятăп... Сан пекех малтанах хатĕрленсе хурас... ырлăх сунатăп сана, Клавочка...

НОВИКОВА. Сана та ырлăх сунатăп. Степа... Кăмăл пулсанах—çыру çыр... Курска...

БЕРЕЗКИН... Эсĕ те çыр... Смоленска... Çыратăн-и?..

НОВИКОВА. Çыратăп.

БЕРЕЗКИН. Ну, сывă пул, Клавочка.

НОВИКОВА. Сывă пул, Степа.

БЕРЕЗКИН (Алăк патнелле хăвăрт утса каять, алăк патĕнче чарăнса чемодан çине пăхать). Клава! Ку сан чемодан-и? Ох! Ытла йывăр вăл. Мĕнле йăтса çитерĕн эсĕ ăна?..

НОВИКОВА. Ничего, Степа, йăтса çитерĕп-ха.

БЕРЕЗКИН. Йăтса çитерĕн-ши? Итле-ха, эпĕ каялла килнĕ чух сан пата кĕрсе тухăп, вокзала йăтса çитерĕп, унтан поезд çине те...

НОВИКОВА. Спасибо, Степа, пулмĕ апла тума... Эсĕ хăвăн поездна кая юлатăн.

БЕРЕЗКИН. Çук, кая юлмастăп.

НОВИКОВА. Мĕнле кая юлмастăн? Сан поезд маннинчен хĕрĕх минут малтан тухса каять вĕт...

БЕРЕЗКИН. Çук, пĕр вăхăтрах каять...

НОВИКОВА. Мĕнле пĕр вăхăтрах!.. Эсĕ хăвах поезд сакăр сехет те 15 минутра каять терĕн-çке...

БЕРЕЗКИН. Поездчĕ çапла та... сакăр сехет те 15 минутра каять те... анчах эпĕ вăл поездпа каймастăп.

НОВИКОВА. Мĕнле каймастăн... Хăш поездпа каятăн вара эсĕ!

БЕРЕЗКИН. Эсĕ хăшĕнпе каятăн—эпĕ те çавăнпах. Сакăр сехет те аллă пиллĕк минутра, Курск çулĕпе...

НОВИКОВА. Сакăр сехет те 55 минутра, Курск çулĕпе!?. Мĕскер, тетĕн?.. Ăçталла каятăн вара эсĕ?..

БЕРЕЗКИН. Курска...

НОВИКОВА. (Пăшăрханса). Ăнланмастăп... Тен, эсĕ яланхи пекех халĕ те арпаштаратăн пулĕ... эсĕ Смоленска кайма назначени илнĕ-çке!..

БЕРЕЗКИН. Назначение Смоленска илнĕччĕ те, анчах кайран мана Курска куçарчĕç... Кадрсен секторĕ турĕ ăна!.. Кам пĕлет вĕсене, темĕскере кура улăштараççĕ хăйсен решенине... Пĕрре пĕр хулана кайма назначени параççĕ, тепре тепĕр хулана... Клава, мĕн пулчĕ сана?

НОВИКОВА. (Вăйсăрланнă сасăпа). Степа, сĕтел çинче тинктура валерианĕ... мана вунпиллĕк тумлам дозировка...

БЕРЕЗКИН. Акă... акă ме, ĕç...

НОВИКОВА. (Пауза хыççăн). Чăнах та, Степа, нимĕн те ăнланма çук, темĕскере кура улăштараççĕ кадрсем секторĕнче хăйсен решенине... Пĕрре пĕр хулана кайма назначени параççĕ, тепре тепĕр хулана... мĕншĕн тесен... мĕншĕн тесен... мана малтан Курска кайма назначени пачĕç, кайран Смоленска куçарчĕç. (Пауза хыççăн). Мĕн пулчĕ сана, Степа?.. Халех тумлататăп...

БЕРЕЗКИН. Тумлат! Мана... дозировка... Çирĕм... (Пауза хыççăн). Клава, кала-ха мана, акă мĕн кала, хăçан куçарчĕç сана Курскран Смоленска?..

НОВИКОВА. Нумай пулмасть... паян...

БЕРЕЗКИН. Мана та нумай пулмасть... мана та паян куçарчĕç Смоленскран Курска.

НОВИКОВА. Степа, кала-ха мана... кала-ха... Эсĕ Денисенко юлташ патне звонить туран-и?

БЕРЕЗКИН. Звонить турăм. А эсĕ?

НОВИКОВА. Эпĕ те звонить турăм... Мĕншĕн звонить туран эсĕ?

БЕРЕЗКИН. Ăнланмастăн-и эсĕ мĕншĕнне?

НОВИКОВА. Ăнланатăп... Эсĕ... эсĕ мана çав тери...

БЕРЕЗКИН. Çавтери... эсĕ тата?

НОВИКОВА. Ан та ыйт... Ыйтмаççĕ ун çинчен... Кирлĕ мар ыйтма.. Эсĕ мана хăçан...

БЕРЕЗКИН. Иккĕмĕш курсра...

НОВИКОВА. А эпĕ пĕрремĕшĕнчех... Савнă чунăм, ăçта кайăпăр ĕнтĕ эпир?

БЕРЕЗКИН. Хуть те ăçта пултăр, анчах пĕрле.

НОВИКОВА. Тĕрĕс... Пĕрле... Тепре звонить тăвар Денисенко юлташ патне...

БЕРЕЗКИН. Звонить тăватпăр Денисенко юлташ патне...

НОВИКОВА. Денисенко юлташ, тен, çиленсе те пăрахĕ, анчах вăл юратса курнă пулсан... тен, хытах çиленмĕ. Два—одиннадцать—двадцать девять... Да... Денисенко юлташа парăр-ха... Денисенко юлташ-и? Кăна каллех эпĕ-ха, эпĕ кăна мар, эпир... Эпир çав... Новиковăпа Березкин врачсем... Денисенко юлташ, эпĕ сирĕн пата звонить тунăччĕ, Березкин та звонить тунă... анчах... Эпĕ те, вăл та тепĕр хут звонить тума шут тытрăмăр... Денисенко юлташ, ан çиленĕрччĕ... Мĕн ĕçпе тетĕр-и?.. Гм... Ĕçĕ... акă мĕнре... Эпир... врач Березкин тата эпĕ сиртен пире пĕр вырăна кайма назначени пама ыйтатпăр... Пĕрле çав... Пĕр хулана... Ан çиленĕрччĕ, Денисенко юлташ... Тархасшăн, ан çиленĕр... Эсир ăнланакан çын!

*В. Юманка* вырăсларан куçарнă.

---

# ВУЛАКАНСЕН ЖАЛОБИСЕМ

## *Капкăн тус!*

*Сана эпир хамăр пата хăнана килсе курма ыйтатпăр. Анчах та, Капкăн тус, хăнана тухсан, мухмăр уçакан эмел кăсъяна чикме ан ман. Унсăрăн пирĕн колхоз председателĕ Ф. Алексеев юлташ, мухмăрпа супса çӳрекенскер, сире ăшшăн йышăнаймĕ, хăйĕн яланхи йăлипе сире те вăрçса хăртса тăкма пултарĕ. Йĕплĕ çăмахна хупа пĕрле илсе килсен тата авантарах пулмалла. Куç пек кĕтетпĕр.*

*Пирĕн адрес çапла: Красноармейский район, Буденный ячĕпе тăракан колхоз.*

***И. С.***

Секретарь и вып. редактор И. Илларионов. Зам. ответственного редактора В. Я. ЯКОВЛЕВ.
Сдано в производство 9/IX-40 г. Подписано к печати 14/X-40 г. НТ 2575. Заказ № 605.
Формат бум. 58Х84¹/₈. Объем 2 п. л. Тираж 7.220 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

Хакĕ 30 пус.

# ÇĔМĔРЛЕ КОМБИНАЧĔН ПАХАЛĂХ АЛИ

Çĕмĕрлери древкомбинат паян кунченех брак, комплектлă мар продукци кăларма чарăнман.

(Хаçатсенчен).




Н. Сверчков ÿкерчĕкĕ.